

Виталий Енĕш: 70 çул

Енĕш — ялан пĕрремĕш

1967 çулта Тутарстанран Шупашкара куçса килсе «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаçат редакцине ĕçе вырнаçнă хыççăн Пичет çуртĕнче хатĕрлесе кăларакан хаçат-журнал хайлавĕсемпе тăтăшах паллашма тытăнтăм та тўрех çакна асăрхарăм, хăшĕ-пĕри кĕске хыпарсем пичетлет, тепри пурнăçра пулакан тўнтерле ĕçсем çинчен çырать, кахалсене, ултавçăсене, ют пурлăха хапсăнакансене тăрă шыв çине кăларать, виççĕмĕшĕ — парти, комсомол, совет органĕсен ĕçĕсем çинчен салху та кичем, анчах шутсăр вăрăм хайлавсем «шăрçалама» хăнăхнă иккен, тăваттăмĕшĕ физкультурăпа спорт темине кăмăллать... тата ытти те, тата ытти те. Нумай çыраççĕ, ўркенмеççĕ, пĕр материалне тепринчен уйăрса илме май çук, сăмах çаврăнăшĕсем кашни хутĕнче пĕрешкел — вулакана нимпе те илĕртмеççĕ, савăнтармаççĕ, тĕлĕнтермеççĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, хаçатсенче те, журналсенче те пĕр харăсах тенĕ пек Пушкăрт Республикинчи Авăркас район хаçачĕн редакцийĕнче ĕçлекен темле Виталий Енĕшĕн хайлавĕсем пичетленме тытăнчĕç. «Пионер сассинче» вăл ачасем валли сăвă ярăмĕсем е пĕчĕккисен психологине, тавра курăмне ăнланса эссесемпе калавсем кăларать, «Капкăн» журналта ăша тытса кулмалли шўтсем, юморескăсем, фельетонсем вырнаçтарать, «Коммунизм ялавĕнче» (хальхи «Хыпар») Пушкăртстан чăвашĕсен пурнăçĕпе çыхăннă тĕрленчĕксем, статьясем, очерксем, «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче вара калавсем, юмахсем, повеçсем пичетлет. «Кам-ши ку, Енĕш хушма ятпа тăван литературăна хăюллăн килсе кĕнĕ çын?» тесе шухăшлаттăм эпĕ ун хайлавĕсене вуланă май. Каярах паллă пулчĕ, ку вăл Канаш таврашĕнчи Пратьякас Енĕш ялĕнче çуралса ўснĕ Виталий Григорьевич Григорьев пулнă иккен. Çартан таврăн-

Виталий Енĕшпе статья авторĕ Порфирий Афанасьев пушкăрт çыравçисем хушшинче

сан вăл Пушкăрт Республикинчи Стерлитамак хулинче токарьте, слесарьте вăй хунă, ун хыççăн «Çĕршыв çулĕ» хаçатра тăлмачра ĕçленĕ.

Эпĕ унпа 1969 çулта паллашрăм. Çуллахи кану вăхăтĕнче ашшĕ-амăшĕ патне килсен Виталий Шупашкарти Пичет çуртне кĕрсе тухрĕ, тĕрлĕ редакцире ĕçлекен журналистсемпе чунне уçса калаçрĕ. Ун чух эпĕ чăвашсен тĕп хаçатĕнче, «Коммунизм ялавĕ» хаçатра, информаци пайĕнче ĕçлеттĕм те маншăн чи кирли — пултаруллă хыпарçăсемпе ĕçлĕ çыхăнусем йĕркелесе ярассиччĕ.

Вунă-вун пилĕк минут калаçнă хыççăнах çак пултаруллă автора хамăрăн редакцие ĕçе вырнаçтарас шухăш кĕрсе кайрĕ.

— Лар-ха эс çак вырăнта пĕр кана хаçат вуласа, — терĕм те эпĕ Виталие хам тӳрех хаçатăн тĕп редакторĕ Михаил Николаевич Якимов патне васкарăм. Аплакапла тетĕп, ман пӳлĕмре çак самантра Пушкăртстанран килнĕ пултаруллă журналист Виталий Енĕш ларать, хăй Канаш районĕнче çуралнă, вĕçертес марччĕ ун пек маттурсене.

— Хам та савăнса вулатăп ун материалĕсене, — тет мана М.Н. Якимов. — Эпĕ халь ĕçлĕ ларăва васкатăп, кала ăна — эпир ăста журналиста пĕр иккĕленмесĕр хамăрăн редакцие йышăнма хатĕр.

Шупашкартан Виталий Енĕш хавхаланса та çунатланса тухса кайрĕ.

Тем вăхăтран Пратьякас Енĕш каччи чăнах та Чăваш Республикин тĕп хулине килсе çитрĕ. Анчах... пирĕн редакцие мар — «Капкăн» журнала. Унта та ăна хапăл тусах кĕтнĕ иккен. Журнал редакторĕн Василий Тоймакăн (В.Я. Яковлевăн) йыхравĕ килĕшерех панă пулас çамрăк автора, каярах сатирăпа юмор жанрне вăл хăйĕн пултарулăхĕнче тĕпре тăраканнисен вырăнне хурса ĕçлерĕ, редактор çумĕ таранах ӳсрĕ.

«Çапла эпĕ Шупашкарта ик-виç çул лăпкаха пурăнтăм, — малалла каласа парать Виталий Григорьевич. — Тĕп редакторсене те, аслă пĕлӳллисене те пайтах хайлавĕсене хатĕрлесе кун çути кăтартма пулăшрăм. «Капкăн библиотекинче» уйрăм кĕнеке кăларма шутланă Л.Я. Агаков кĕнекине питĕ тĕплĕн редакцилерĕм пĕррехинче. Ара, хăш-пĕрин шучĕпе, унăн, халăх писателĕн, хайлавĕсе-

не тӳрлетме çук имĕш. Хăйĕн ал çырăвне эпĕ епле тимленине лайăх тĕрĕсленĕ Агаков мана пичет çуртĕнче чылай-чылай çын умĕнчех: «Эсĕ ма халĕ те Писательсен союзĕн членĕ мар? — терĕ. — Заявлени çыр. Рекомендацисене пĕрне хамах паратăп!» Эппин, килĕшнĕ ăна эпĕ тӳрлетни.

Илемлĕ литература анинче те тар кăларсах ĕçлерĕ пирĕн Виталий. Кĕçех унăн хайлавĕсем «Капкăн» журнал кăларса тăракан уйрăм библиотекăра тата Чăваш кĕнеке издательстви кăларакан кĕнекесенче çине-çинех пичетленме пуçларĕç. Вулакансем унăн «Çĕр тĕрекĕ» (1972), «Саваламан сак çине» (1972), «Вăтăр пĕрремĕш мăкăль» (1976), «Асаннĕр пур-и?» (1979), «Пĕçерккĕ» (1980), «Чи маттурри Урине» (1984) кĕнекисене уйрăмах хытă килĕштерчĕç. Çак произведенисене Л. Агаков та, А. Ĕçхĕл те, Хв. Уяр та, Мускавра тухса тăракан «Крокодил» журнал ĕçченĕ, çĕршывĕпех паллă сатирик Ян Полищук та пысăка хурса хакларĕç, вĕсенчен чылайăшне вырăсла тата ытти наци чĕлхисене куçарчĕç. Киевпа Ĕпхӳре вара Виталий Енĕшĕн произведенийĕсене украинла тата пушкăртла уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларчĕç.

Вулакансем те, литература критикĕсем те пĕр шухăшлă пулса çакна уйрăмах палăртатчĕç: çамрăк çыравçă чăваш литературинче паллă йĕр хăварнă Куçма Чулкаç, Аркадий Ĕçхĕл, Стихван Шавли, Хветĕр Уяр, Николай Евдокимов, Александр Кăлкан, Владимир Ухли, Трофим Иванов-Таçук тата ытти шӳт ăстин меслечĕсене алла илсе сатирăпа юмор лаççинче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне çине тăрса шырать. Çак шыравра ăна çут çанталăк панă çивĕч ăспуç, анлă тавра курăм, пурнăçри тӳнтерле пулăмсене шат та пат тулхăрса кайса мар, хăш чух шахвăртса, хăш чух юлташла тăрăхласа, е «хĕрĕме калам та — кинĕм, илт» тенĕ пек епле тусан лайăхрах пулнине палăртарах систерсе çырма пĕлни вулакан чунне хăй енне çавăрма пулăшрĕ. Çапла çав, литературăри ӳсĕм çулĕ çакнашкал маттурсем килсех тăнипе аталанать те ĕнтĕ. Унчченхи юрăсене тепĕр хут юрланипе мар, хăвăн ăс-пуçупа, хăвăн сассупа, хăвăн хăюлăхупа çынна савăнтармалăх, çĕнĕ çунат памалăх çĕнĕ юрă шыраса тупсан кăна тăван халăх сана тавлăн та хасеплĕн алă çупма тытăнĕ.

— Агаков мана Союз членне кĕме сĕннĕ хыççăн эп пит салхуланса кайрăм, — малалла каласа парать Виталий Енĕш. — «Эх, Леонид «Агакович», — терĕм хам ăшăмра, — пĕлместĕн-ха эс ман пĕлĕвĕм çукраххине...» Çав вăхăталлах ман телее партин аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă пĕр шеремет ман çинчен çăхавсем çырма тытăнчĕ: «Енĕшĕн аслă пĕлӳ çук, апла пулин те редакцире çавăн пек пысăк пукана тивĕççĕр йышăнса ларать!» Ку хыпар чылайăшне пит тĕлĕнтерсе ячĕ. Уйрăмах — тĕп редактора «Эс дипломсăрах-им?» — ыйтрĕ вăл кĕскен. «Ăхă», — терĕм çеç. «Халех каçхи шкула çӳреме тытăн, ачам», — ăс пачĕ вăл мана. Вăл çул кăтартса янипе вăтам пĕлӳ илтĕм.

Професси ăсталăхне ӳстерме Виталий Енĕше 1979—1981 çулсенче Мускавра А.М. Горький ячĕллĕ Литература институтĕ çумĕнчи Литература аслă курсĕнче вĕренни те нумай пулăшрĕ. Кунта вăл тĕнче литературин классикĕсен ăсталăхне тишкерчĕ, хăйпе пĕрле вĕренекенсен тата Мускавра тăтăшах пулса иртекен семинарисен, пленумсен, съездсен ĕçне хутшăнакан паллă çыравçăсен тĕл

пулăвĕсенче хăйне валли усăллине нумай тупрĕ. Мускавран таврăнсанах пултаруллă çыравçа Чăваш писателĕсен союзĕн литература консультанчĕн ĕçне шанса пачĕç, кăштах вăхăт иртсен ăна СССР Литература фончĕн чăваш уйрăмĕн директорне çирĕплетрĕç. Çак ĕçсенче вăл çамрăк авторсен ăсталăхне ӳстерес тата чăваш çыравçисен ĕçпе кану условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе ырмиканми тăрăшрĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн сакăр вуннăмĕш çулĕсен иккĕмĕш çурринче эпĕ Чăваш писателĕсен союзĕн правленине ертсе пытăм. Çав çулсенче Виталий Григорьевичпа пĕрле эпир СССР тата Раççей Литфончĕн ертӳçисемпе çине-çинех Мускавра та, Шупашкарта та тĕл пулса чылай ыйтăва татса пама пултартăмăр. Пилĕк çул хушшинче пирĕн икĕ писатель çемйи Литфонд пулăшнипе хваттер илме пултарчĕ. Вăхăтсăр уйрăлса кайнă вуншар çыравçă ячĕсене ĕмĕр асăнмалăх вĕсем ĕçленĕ е пурăннă çуртсем çинче мемориал хăмасем вырнаçтартăмăр. Ку ĕç хамăр республикăра çеç мар, ытти чăваш хушшинче те туса пыма тăрăшрăмăр. Çапла вара эпир Пушкăртстанри Усăллă ялĕнчи вăтам шкул çурчĕ çине Данилов-Чалтуна, Ульяновск облаçĕнчи Мелекес хулинче Ваççа Аниççине чысласа асăну хăмисем вырнаçтартăмăр. Писательсен союзĕнчи паллă çынсене те, хастар çамрăк авторсене те çĕршыври чаплă пултарулăх çурчĕсене çĕнĕ произведенисем çырма е сывлăха çирĕплетме йӳнĕ хакпа путевкăсем парса хавхалантартăмăр.

Пĕр пысăк ыйту — хамăрăн Кăкшăмри «Силпи» пултарулăх çурчĕпе юнашар Атăл тăрăхĕнчи писательсем валли вун икĕ хутлă пултарулăх çуртне тума тытăнас ыйтăва та ăнăçлă тапратса янăччĕ эпир, ун пирки Шупашкара ятарласа килнĕ СССР Литфончĕн пуçлăхĕпе В.А. Хохловпа пĕрле Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн председателĕ Л.П. Прокопьев патĕнче пулса вăл çак проектпа хаваспах килĕшнине те пĕлсе тухнăччĕ. Шел, ĕмĕт пурнăçланаймарĕ, 90-мĕш çулсенче çĕршывра сиксе тухнă асар-писер пăтрашу шухăша тĕпренех кăкласа пăрахрĕ.

...Ăçта кăна пулмарăмăр эпир Виталий Енĕшпе пĕрле пурнăç тăршшĕнче! «Хурçă ăйăрсем» е «хурçă кайăксем» пире туслăх çулĕпе Пушкăртстана та, Мускава та, Азербайджана та, Хусана та, Петербургпа Чул хулана та, Ульяновскпа Минска та пĕрре мар илсе çитернĕ. Тĕлĕнеттĕм вара, ăçта пырса çитетĕн — унта Енĕш манран маларах пулнă, вăл килнине пĕлсенех хăна çуртне унăн тусĕсем шăкăрин пырса тулаççĕ. Пĕринпе вăл çарта Байконур таврашĕнче службăра тăнă, тепринпе Пушкăртри Стерлитамакра е Авăркаспа Пелепейре ĕçленĕ, виççĕмĕшпе Мускавра пĕрле вĕреннĕ, тăваттăмĕшĕпе куçару ыйтăвĕсемпе тăрмашнă чух çывăх туслашнă.

Акă 1981 çулхи юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче эпир Виталий Енĕшпе Мускавран Баку хулине самолетпа вĕçсе çитрĕмĕр. Чаплăран та чаплă уява чĕнсе янă пире — Азербайджан хăйĕн мухтавлăран та мухтавлă ывăлĕ, легендăсене кĕрсе юлнă Низами Гянджеви поэт тата шухăшлавçă çуралнăранпа 840 çитнине пĕтĕм тĕнчерен килнĕ паллă писательсемпе, политиксемпе, искусство çыннисемпе пĕрле мăнаçлăн паллă тăвать. Вырăнти аэродрома анса лартăмăр кăна — пире тӳрех Азербайджан писателĕсен союзĕн хастарĕсем Сабир Рустамханлыпа Акрам

Айлисли ăшшăн кĕтсе илчĕç, çăмăл машинăпа чаплă хăна çуртне илсе кайса вырнаçтарчĕç.

Каçхине Баку хулин Ленин ячĕллĕ керменĕнче савăнăçлă пуху пулчĕ. Президиумра — Азербайджан Союзлă Республикин пуçлăхĕсем — Г. Алиев, О. Багиров, Г. Гасанов, СССР Наукăсен академийĕн Востоковедени институчĕн директорĕ Е. Примаков, çĕршыври паллăран та паллă çыравçăсем В. Карпов, М. Ибрагимов, Н. Галевич, О. Сулейманов, Д. Ованнес, Пăлхар, Монголи, Инди, Мали, Палестина, Тунис, Турци, Эфиопи писателĕсемпе поэчĕсем. Çак каç трибуна умĕнче тухса калаçнă çынсем Низами çырса хăварнă сăвăсемпе поэмăсенчи Лейлипе Меджнун, Хосравпа Ширин, Искендерпе Нушабе вилĕмсĕр сăнарĕсене тивĕçлипе мухтарĕç, поэт таланчĕ сакăр ĕмĕр ытла чи çутă çăлтăр пек ялтăраса тăнинчен тĕлĕннине пĕлтерчĕç.

Тепĕр кунне пирĕн пиншер çынран тăракан делегаци Гянджа хулине (ун чухне вăл Кировобад ятлăччĕ), Низами тăван çĕршывне, çул тытрĕ. Унта пырса çитсен эпир хамăра юмах тĕнчине — поэзипе музыка тĕнчине лекнĕ пекех туйса илтĕмĕр. Хулан кашни тăкăрлăкĕнче илемлĕ сценĕсем туса тултарнă, кашни сцени çинче Низамин тĕрлĕ сюжечĕсенчен йĕркеленĕ инсценировкăсем кăтартаççĕ, ăçта ан пыр унта — азербайджан халăхĕн ташшисем, юррисем, авалхи музыка инструменчĕсен чуна пырса тивекен кĕввисем. «Вăт халăх тăк халăх вара ку, епле типтерлĕн упраççĕ хăйсен йăли-йĕркине, епле мăнаçланаççĕ хăйсен мухтавлă ывăлĕ-хĕрĕсемпе!» — тетпĕр эпир Виталий Енĕшпе тăванла халăхăн чаплă уявне ытараймасăр.

Хула хĕрринче, Низами мавзолейĕ патĕнче, поэзи уявĕ пулчĕ. Çак уява хутшăнакансем алла кĕреçе тытса çак вырăнта Низамин сачĕ ĕмĕр кашлатăр тесе çамрăк чинарăсем лартса хăвартăмăр. Ун пирки эпĕ çав кунах çакăн пек йĕркесем çырса хунăччĕ:

Çак уява пуçтарчĕ Низами.
Тĕнче поэчĕсем çак хулара.
Куç виçипе виçсе те илейми
Пин тумлă халăх хĕвĕшет умра.
«Кам пĕлес пур, пурнайăн-и ирччен?
Васка эс ырлăх вăрлăхне акма.
Çак çутă тĕнчерен уйрăличчен
Этем тусневаскатăр пулăшма...»
Поэт халалĕ — çăл куç пек таса.
Гянджа урамĕнче пĕр лăпкă ир
Кашни ăш пиллĕ сăвă каласа
Чинара сачĕ лартрăмăр эпир.
...Перо та кĕреçе кăна пирте.
Поэтăн хĕç-пăшалĕ çав анчах.
Çын чĕрине илем кĕрте-кĕрте
Янратăр пирĕн çулăмлă сăмах!

Каçхине хулари Çамрăксен керменĕнче поэзи каçĕ питĕ мăнаçлăн иртрĕ. Тĕнчери паллă поэтсем хушшинче Низами ентешĕсене эпир те Виталий Енĕш-

пе пĕрле Чăваш çĕршывĕнчен хĕрӳллĕ салам каларăмăр, хамăрăн сăвăсене вуларăмăр.

Баку хулине каялла таврăнсан хăна çуртĕнчи пирĕн пӳлĕме В. Енĕшĕн тата манăн юлташсем йышлăн пырса кĕчĕç. Вĕсенчен чылайăшĕ — тĕрĕк халăхĕсен çыравçисем.

— Вăт, Виталий тус, çаксем ĕненмеççĕ, тĕрĕк халăхĕсен чи авалхи тăхăмĕсем чăвашсем мар пуль теççĕ, ăнлантар-ха вĕсене, — ыйтрĕ пĕри, Джабир ятлăскер, В. Енĕшрен.

— Мĕн ăнлантармалли пур кунта? Шупашкарта манпа кӳршĕллех тĕнчипе паллă тюрколог Михаил Романов профессор пурăнать. Акă унăн пĕр кĕнеки, «Чувашский язык в семье алтайских языков» текенни, ман чăматантах выртать. Чăваш чĕлхи чи авалхи тесе тĕнчене ĕнентернĕ ĕнтĕ вăл. Акă ятарласах çак страницăсене вулăр-ха... — терĕ Виталий.

Хăнасем, хăйсене хăйсем шанмасăр, ман çине те пăхкалаççĕ.

— Тĕрĕсех калать Виталий, — терĕм эпĕ. — Эсир тата нумай пулмасть Мускавра кăларнă «Энциклопедия юного филолога» кĕнекене тупса вулăр-ха. Унта тĕрĕк чĕлхисен генеологиллĕ аталану историйĕн йывăççине те ӳкерсе кăтартнă, çав йывăç тымарĕсем — чăвашпа якут чĕлхисем, ытти тĕрĕк чĕлхисене вара вĕсем чылай çамрăкрах пулнă пирки çав тымарсенчен шăтса ӳснĕ туратсем е çулçăсем пек кăтартса панă.

— Енĕшпе тавлашма çук, вăл ялан пĕрремĕш, — терĕ вара ним калама аптраса Азербайджан поэчĕ Сабир Рустемханлы. Çак сăмахсене тĕпе хурсах пулĕ, каярах Сабир чăваш поэчĕсен сăввисене азербайджанла уйрăм кĕнекен куçарса кăларчĕ.

Çапла, Енĕш ялан пĕрремĕш. Çак чăнлăхпа çывăх пулнине эпĕ 1997 çулта Пушкăрт Республикинчи Пелепей хулинче иртнернĕ «Хавхалану çăлкуçĕ» поэзи фестивалĕнче тепĕр хут аса илтĕм. Çак туслăх фестивалĕ (унта виçĕ республика — Пушкăрт, Тутар тата Чăваш республикисен поэчĕсем хутшăнаççĕ) пухăниччен пилĕк çул маларах Виталие, Шупашкарта пурăнакан писательсенчен пĕрремĕш çынна, «Пушкăрт Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парса чыс тунăччĕ.

Хальхинче вара Пелепей хулинче виçĕ талантлă çын — Ĕпхӳ çыравçи Тагир Тагиров (Ахунзянов), Хусан сăвăçĕ Ренат Харис тата пирĕн Виталий Енĕш пушкăртсен çулăмлă поэчĕн Фатых Карим ячĕллĕ премин пĕрремĕш лауреачĕсем пулса тăчĕç. Çак ятпа хулари Культура керменĕнче литературăпа музыка касĕ иртрĕ. Пултарулăх ăмăртăвĕнче çĕнтернĕ маттур çыравçăсене Пушкăртстан Президенчĕ Муртаза Рахимов та, Пелепей хула канашĕн председателĕ тата Пелепей хулипе районĕн администраци пуçлăхĕ Риф Газизов та, поэтсемпе критиксем те, вулакансем те хĕрӳллĕн саламларĕç. Ара, чăннипех чи тивĕçлисем, чи пĕрремĕшсем пулчĕç-çке асăннă лауреатсем!

Кунта манăн Виталий Григорьевăн тепĕр пархатарлă та сăваплă ĕçĕ çинчен каласа хăварас килет. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче пирĕн аслă Патриархăмăр Иван Яковлев «Эпĕ вĕçнех туса çитереймен ĕçе эсир туса çитерĕр, Авалхи Сăмаха вĕçне çитиччен куçарса, чăваш халăхĕ патне Турă çыр-

ăвне пĕтĕмпех, туллин çитерĕр» тесе çырса хăварнă халалне тĕпе хурса Шупашкар тата Чăваш Митрополичĕ Варнава йĕркеленипе республикăра Чăваш Библи комиссийĕ туса хучĕç. Çак комиссие чиркӳпе православи тĕнĕн ĕçченĕсем, чăваш çыравçисем, çав шутра — Виталий Енĕш, Денис Гордеев, Петр Львов, Олимпиада Таллерова тата эпĕ кĕтĕмĕр. Пире сумлă чĕлхеçĕсем, наука сотрудникĕсем пулăшса пычĕç, пирĕн куçарусене тĕплĕ вуласа паха сĕнӳсем пачĕç. Комиссире ĕçлекен çыравçăсем Шупашкарта, Мускавра, Минскра, Санкт-Петербургра пулса тĕрлĕ семинарпа конференцисене хутшăнчĕç. Чăвашсен куçару ушкăнне Амстердамри Вырăс Православи Чиркĕвĕн протоиерейĕ Сергий Овсянников ертсе пычĕ. Кăшт каярах пирĕнпе пĕрле ĕçлеме Ева Лисина кăмăл турĕ.

1997 çулăн çĕртме уйăхĕ тĕлне эпир Авалхи Сăмахăн мĕн пур кĕнекине куçарса хатĕрлесе çитертĕмĕр. Çак ятпа 1997 çулхи çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕнче Шупашкарта Библие чăвашла куçаракансен конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта çакăн пек резолюци йышăнчĕç: «...1991 çулта пуçланнă ĕç çав тери тухăçлă та ăнăçлă пулчĕ. Авалхи Сăмахăн чăвашла куçарнă мĕн пур текстне малтанхи редакци шайĕпе хатĕрлесе çитернĕ». Никама пăхăнман экспертсем куçарăва юрăхлă тесе хак панă.

Виталий Енĕш тесен, вăл Авалхи Сăмахăн вунă кĕнекине куçарма хутшăннисĕр пуçне «Акафистсен» виçĕ томне, «Христос çыннин мĕн пĕлмелле?» кĕнекисене икĕ томпа, унсăр пуçне «Ĕненӳпе çăлăнăç çинчен», «Турă Амăшне мухтаса хывнă акафистсем, Псалтирь, кĕлĕсем», «Çынна сыхласа усракан Ангелпа куллен калаçмалли кĕнеке», «Çылăхран мĕнле ӳкĕнмелле?» тата ытти кĕнекене чăвашла куçарса кăларчĕ. Хăй вăл Христос Вилĕмрен чĕрĕлсе тăнин ячĕпе лартнă чиркӳре пĕр хушă алтарь ĕçĕнче, старостăра вăй хучĕ, Шупашкарта тĕн училищинче темиçе çул вĕрентсе пурăнчĕ.

Çапла, сăваплă та пархатарлă ĕç сахал мар турĕ Виталий Григорьевич Енĕш пурнăç тăршшĕнче. Çитмĕл çулхи юбилей çитнĕ май эпĕ хамăн çывăх юлташăма, кӳршĕме, ĕмĕре пĕрле иртгернĕ шанчăклă çынна çавна çеç калама пултаратăп: иксĕлми вăй, çирĕп сывлăх, çутă та ырă кун-çул патăр сана Çӳлти Аттемĕр! Çут тĕнчене тухса пыракан çĕнĕрен те çĕнĕ кĕнекӳсем çынсен чунне вырнаçса иксĕлми хавхалану кӳрсе тăччăр.

Нумай пурăн!

Порфирий АФАНАСЬЕВ,
чăваш халăх поэчĕ

РЕДАКЦИРЕН: «Тăван Атăл» журнал пултаруллă çыравçа юбилей ячĕпе чунчĕререн саламлать, унăн çĕнĕ хайлавĕпе, «Ял паттăрĕ» повеçĕпе, вулакансене журналăн çитес кăларăмĕсенчен пĕринче паллаштарма палăртать.